# БОГДАН ИСТРУ

*Молдави*

## АННЕ

Ҫил-тӑвӑл пулчӗ пит хаяр та, —
Эс тӑтӑн тӳп-тӳрех, аннем.
Сан умӑнта пуҫа таятӑп,
Сана чи ҫывӑх тус теем.

Эп ҫуралса ӳссе ҫын пулнӑ
Киле-ҫурта упрарӑн эс.
Тӑшман кунта ҫитсе хур тунӑ,
Епле ҫав мӑшкӑла тӳсес?

Эпир пӗрле. Ҫӑвар уҫмашкӑн
Мана паян йывӑртарах.
Сан куҫҫулӳ кӗҫех тумласшӑн,
Сан ҫӳҫӳсем те шап-шурах.

Ҫак кун вӑл тӗлӗк пек халь маншӑн;
Эс юнашар, эп санпала!
Саркайӑк та, ҫӑва тухсассӑн,
Хӑй йӑвинех килет ҫапла.

Эс тинкерен тинкернӗҫемӗн,
Сасартӑк ман тӑнлавсенче
Шур юр куран... вӑл ирӗлеймӗ
Сан ӑшӑ пӳрнӳсем ҫинче.

Ҫапах — пӑхса тӑранаймастӑн!
Анне пӗлет ҫав вӑл кӗтме.
Ача чухнехи пек халь манӑн
Выртасчӗ сан уру патне.

Йӑвашчӗ эс, тӑвӑл тухсассӑн —
Чул ту пек тӑтӑн, тап-таса!
Мӗне хаклаттӑн, юрататтӑн —
Йӑлтах хӑвартӑн сыхласа.

1944